# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## Йывăрлăхсенчен хăраман



**Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тăвакансен ĕçĕ, паттăрлăхĕ питех те пысăк. Пирĕн районтан та окопсем чавма нумай çамрăка илсе кайнă. Шел те вăхăт хăйĕннех илет – çав çулсенче нуша курнă çынсем пирĕн хушăра сахалланса пыраççĕ. Тавах вĕсен тăванĕсене, вĕсем çав çулсенче ĕçленĕ пирки каласа параççĕ.**

Амăшĕ каласа кăтартнипе Луиза Тепеева паллаштарать:

– Манăн анне – Зоя Тепеева **(сăн ӳкерчĕкре)**, хĕр чухне унăн хушамачĕ Вазикова пулнă. Вăл Сĕнтĕр районĕнчи Явăльня ялĕнче 1926 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче çуралнă. 1941 çулта вăл 15 çулти хĕр ача пулнă. Çав çулта хаяр тăшман пирĕн çĕр çине килсе кĕнĕ. Пĕтĕм совет çынни тăшмана хирĕç тăнă. Вăйпиттисем вăрçа кайнă, ватти-вĕтти тылра ĕçленĕ.

Тăшмана пирĕн ял-хулана шалтан-шала кĕресрен чарас тесе Сăр хĕрринче тарăн окопсем чавнă. Ялсенчен унта питĕ йышлăн илсе кайнă. Вăл вăхăтра çанталăкĕ те питĕ сивĕ пулнă çав, çитменнине тата тăхăнмалли çи-пуçĕ япăх, чылайăшĕн уринче çăпата.

Çав вăхăтра вырăнти колхоз председателĕ Егор Салдакеев пулнă. Вăл çынсене пуçтарнă та лаша кӳлсе урапа çине лартса Сăр хĕрне ĕçлеме илсе кайнă. Çимеллисене те вăхăтăн-вăхăтăн вăл турттарса пырса панă. Пĕррехинче пирĕн аннен ĕçленĕ çĕрте çăпатисем çĕтĕлсе пĕтнĕ, улăштарма урăх çук, хăть çара уран ут. Телее çав кунхине председатель лашапа çитнĕ, анне урине асăрханă та ăна хĕрхеннипе лартса килнĕ. Вăл пулман пулсан çавăнтах шăнса вилетчĕ пулĕ çара уралла хĕр ача. Ун чухне Сăр хĕрринче халăх кăткă чухлĕ ĕçленĕ.

Совет халăхĕ йывăр тесе нăйкăшса ларман, вăй çитнĕ тарана Аслă Çĕнтерӳ кунне çывхартнă. Çывăх çыннăм каласа кăтартни темĕн чухлех, пурне те çырса кăтартма çук. Анне каласа панисем – ĕмĕрлĕх асра.

Вăрçă пĕтсен çамрăк Зоя Етĕрнери педагогика училищине вĕреннĕ, 40 çул ытла кĕçĕн çулхи ачасене шкулта пĕлӳ панă. Кирек епле ĕçре те вăл ответлăха туйса ĕçленĕ. Çавăнпа ăна «Отличник народного просвещения» кăкăр çине çакмалли паллăпа чысларĕç.

**Ирина ВЕТЛУГИНА,**
**Юнкă библиотекин ертӳçи.**

## Историе улăштарнă парад

**Ноябрĕн 7-мĕшĕ – çар историне кĕрсе юлнă кун. 1941 çулта çав кун Тăван çĕршывăн тĕп площадĕнче Октябрь революцине 24 çул çитнине халалланă йăлана кĕнĕ çар парачĕ иртнĕ. Вăл Раççей историйĕшĕн, çавăн пекех Тăван çĕршывăн Аслă вăрçипе тата Иккĕмĕш тĕнче вăрçинче уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ăна йĕркелесе Совет Союзĕ, Хĕрлĕ çар Тăван çĕршыва кирек мĕнле лару-тăрура та хӳтĕлеме хатĕррине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса панă. Çарсем парадран тӳрех фронта, Мускава хӳтĕлеме тухса кайнă.**

1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче иртнĕ парада хатĕрленнине питĕ пысăк вăрттăнлăхра тытнă. Мускавăн анăç енче хĕрӳ çапăçусем пынă, тăшман хула çывăхĕнчех пулнă, çавăнпа уяв мероприятине кансĕрлесрен çапла тума йышăннă. Салтаксемпе командирсен пысăк пайĕ вăхăт çитмесĕр те Хĕрлĕ площадьри брусчатка тăрăх утма тивесси пĕлмен, пурте приказ кĕтнĕ. Юлашки самантра парад вăхăтне те улăштарнă, хăнăхнă 10 сехетрен икĕ сехет малараха куçарнă. Мускав хулине çĕр çинчен те, сывлăшран та тапăнасран питĕ вăйлă сыхланă.

Палăртнă кун çанталăк ăмăр пулнă, юр çунă, пĕлĕтсем аялтан шунă. Ирхи 8 сехет тĕлне Мускав гарнизонĕн çарĕсем Хĕрлĕ лапамра парад расчечĕсене тăнă. Парада Мускав çар округĕн командующийĕ П. Артемьев генерал-лейтенант ертсе пынă, йышăнаканни – С. Буденный маршал. Шăп сакăр сехетре çĕршыври пĕтĕм громкоговорительпе тĕп хулари парада янратма пуçланă. Çак парада ытти çĕршывсенче те илтнĕ.

Парад расчечĕсене пăхса çаврăннă хыççăн И. Сталин сăмах илнĕ. «Пирĕн вăрçă – тĕрĕс вăрçă, çĕршыва ирĕке кăларассишĕн пыракан вăрçă. Сире пирĕн мухтавлă çыннăмăрсен – Александр Невский, Дмитрий Донскойăн, Кузьма Мининăн, Дмитрий Пожарскин, Александр Суворовпа Михаил Кутузовăн – тĕслĕхĕсем хавхалантарччăр. Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм! Сывă пултăр пирĕн Тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!», – фронтри тата тылри пĕтĕм халăха чĕнсе каланă вăл.

Çарсем Мускав çар округĕн оркестрĕ калакан çемĕсемпе стройпа утнă. Парада пурĕ 28,5 пин çын, 140 артиллери орудийĕ, 160 танк, 232 автомашина, 16 тачанка, 296 пулемет, 18 миномет, зенитлă 12 пулемет хутшăннă. Лапка юр çунипе авиаци тӳпене çĕкленеймен, çапах сывлăшран тапăнасран хӳтĕлекенсем вăл кун тăшманăн 34 самолетне тĕп тунине пĕлтернĕ. Парад 61 минут та 20 çеккунт пынă.

Мускаври парадпа пĕр кунтах Воронежпа Куйбышев хулисенче шествисем пулнă.

Германи çарĕсен 51 дивизийĕ çавăрса илнĕ хулара парад иртterме пултарни совет çыннисен кăмăл-туйăмне çĕкленĕ. Пирĕн çарсем çапăçу хирĕсенче тăватăмĕш уйăх сухатусем тӳснĕ тапхăрта çакă çынсен чунĕнче шанчăк çуратнă, çĕнтерӳ пирĕн енче пуласса ĕненме хистенĕ. Нумайăшĕншĕн вăрçă условийĕсенче парад туни кĕтменлĕх пулнă. Фронтовиксемпе тыл ĕçченĕсем çакă Мускав тăшмана парăнманнин палли тесе йышăннă.

Çар парачĕ халăхсем хушшинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă тата СССР ятне çӳле çĕкленĕ. «Мускав çывăхĕнче юнлă çапăçусем пынă вăхăтра парад ирттерни – паттăрлăхпа хăюлăх палли» тесе хак панă Британире тухса тăракан «Ньюс Кроникл» хаçат çак пулăм пирки. Çав кун, совет халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине палăртса, Сербири Ужице хулинче те Октябрь революцийĕн уявĕ ячĕпе серб патриочĕсен маршĕ иртнĕ.

**Л. ШУРЯШКИНА.**

## Çамрăк учитель – фронтра

**Сăн ӳкерчĕкри Петр Живойкин майор Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Çурçĕр Хĕвел анăç тата Прибалтика фрончĕсенче çапăçнă. Вăл Москакассинче 1917 çулти июнĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Сĕнтĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕнĕ, 1941 çулта алла учитель дипломне илнĕ.**



Шел пулин те, унăн шкулта ачасемпе ĕçлеме май килмен. Вăрçă пуçланнă çулти июлĕн 9-мĕшĕнче вăл Сĕнтĕр çар комиссариачĕ урлă çар ретне тăнă. Ăна Харьков хулинчи Молотов ячĕллĕ интендант академине вĕренме янă, хыççăн вăл Валдай хулинче Çурçĕр Хĕвел анăç фрончĕн кадрсен пайĕн резервĕнче тăнă. Петр уйрăм сапер батальонĕн адъютант пулăшуçи, трофей уйрăмĕн ертӳçин пулăшуçи пулнă. Каярах та ăна ответлă должноçсем шаннă. Çар продскладĕн управ пайĕн ертӳçи – интендант службин офицерĕ Петр Иванович Аслă Çĕнтерӳ хыççăн та часах та тăван тăрăха таврăнайман. Вăрçă çулĕсенче ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата тĕрлĕ медальпе чысланă.

П. Живойкин ыйтнипе, шкулта математика урокне вĕрентес килнипе управ пайĕн ертӳçине саппаса кăларнă. Мирлĕ пурнăçа пикенсе вăл чылай çул вĕренӳ ĕçĕнче тăрăшнă, учитель пулнисĕр пуçне шкул директорĕнче, директор çумĕнче ĕçленĕ. 1950 çулти ноябрь уйăхĕнче вăл Пелагея Анатольевнăпа çемье çавăрнă.

## 17 çулччен вăрçа кайнă



**Сăн ӳкерчĕкре Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Серафим Иванова куратăр. Вăл 1926 çулта Çĕн Матьăкра çуралнă. Ашшĕне Иван Афанасьева 1900 çулта çуралнăскерне, 1942 çулта фронта илсе кайнă. Вăхăт нумай та иртмен, тăван киле вăл хыпарсăр çухални пирки пĕлтернĕ. Серафим 6 класлă пĕлӳ илнĕ. Колхоз ĕçне вăй çитнĕ таран хутшăннă.**

1943 çулти ноябрĕн 10-мĕшĕнче ятарлă чĕнӳпе 17 çул тултарнă яшсене çар ретне тăратасси пирки йышăну тухнă. Серафима ун чухне 17 çул тултарман-ха, кĕлетке-çурăмĕпе вара вăл пысăк та тĕреклĕ пулнă. Çавăнпа та фронта каймаллисен йышĕнче унăн ячĕ те пулнă. Вăрнартан каякан станцирен вăл ыттисемпе пĕрле инçетри çула тухнă, чукун çул тăрăх Хабаровска çитнĕ. Çар ĕçне вăл мотоинженери батальонĕнче пурнăçланă. Çар присягине 1944 çулти январĕн 10-мĕшĕнче тытнă. Маньчжурие япун самурайĕсенчен хăтарас çапăçусене хутшăннă. 1945 çулти ноябрь уйăхĕнчен пуçласа 1947 çулти апрель уйăхĕччен Амур батальонĕн инженерипе сапер уйрăмĕнче пулнă. Сапер часах çар ĕçĕнчен уйрăлман. Вăрçă вăхăтĕнче ăна Тăван çĕршыв вăрçин 2 степень орденĕпе чысланă, медальсем те пур унăн.

Серафим 1950 çулти июлĕн 11-мĕшĕнче тăван тăрăха таврăннă, мăшăрланнă, пилĕк ачаллă пулнă. Вăл вырăнти «Ударник» хуçалăхра бригадирта, ферма, склад ертӳçисенче тăрăшнă.

**А. ПЕТРОВА.**
**Дубовка поселокĕ.**

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*